*Ахрат, И. Пирвайхи чăваш шăпчăкĕ / Иван Ахрат // Чăваш ен. - 1998. - 21-28 февраля (№ 7) - С. 5.*

Иван Ахрат

**Пирвайхи чăваш шăпчăкĕ**

«Эпĕ хамăн пурнăçăма пуçласа Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче тăван хăлăх юррипе çыхăнтартăм. Çавăнтанпах ăшăмра юрă пурăнать. Пĕччен юрласан – хам валли, халăх умне тухсан – халăх валли», – çапла аса илетчĕ Анна Ивановна Чĕмпĕр шкулĕ хăй пурнăçĕнче уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине паллă туса.

Тăвай районĕнчи Енĕш Нăрваш шкулĕнче пĕлӳ илнĕ хыççăн Анна Токсина – ун чухне вăл Иванова хушаматпа çӳренĕ-ха – 1911 çулта Чĕмпĕрти чăваш шкулне вĕренме кĕрет. Кунта пулас юрăçа телей шăпи кĕтсе тăнă. Вăл шкултан тин кăна вĕренсе тухнă Федор Павлов, Степан Максимов, Капитолина Эсливанова музыкантсен тарават аллине лекет. Чĕмпĕрти шкула пĕтĕмпех «пиллĕк» паллăсемпе вĕренсе пĕтерет вунсаккăрти хĕр. Çамрăк хĕрача-учительница, пĕчĕкçеççĕ чăматанне çĕклесе, Çĕрпӳ хулине пырса çитет, ĕç пирки калаçма инспектор патне кĕрет. Анчах ăна кунта юрăхлă ĕç вырăнĕ тупса параймаççĕ. Çакăн хыççăн вĕренӳ çулĕ пуçланас умĕн Анна Ивановна Самар кĕпĕрнинче Мелекесс тавращĕнчи çурри вырăс, çурри чăваш ялне пырса вырнаçать. Анна пыриччен шкул та пулман ку ялта, хут-кĕнекепе никамах та интересленмен. Çакăнта тăвать вĕренӳри хăйĕн пирвайхи утăмĕсене çамрăк учительница. Кунне-çĕрне шкулта ирттерет. «Çарăмсан хĕрне тухаттăм та кăмăл тăраничченн макăраттăм, – каласа паратчĕ юрăçă вуншар çул иртсен. – Çарăмсанăн тулăх шывĕ, çӳллĕ çыранĕсем Мăн Çавала аса илтеретчĕç. Шухăшăмсемпе, ĕмĕтсемпе Чĕмпĕрелле е Чăваш çĕршывнелле вĕçсе каяттăм...».

Çулталăкранах Анна Ивановна Çĕрпĕве таврăнать. Малалла вĕренес кăмăлĕ çирĕп пулнă май гимназири укĕ çуллăх курса вырнаçать. Унтан вĕренсе тухсан аслă шкулсене кайма çул уçăлать.

Пĕррехинче, 1918 çулхи хĕл кунĕсенче, Çĕрпĕве Хусантан хут килет:

тĕрлĕ çĕрте вĕренекен чăваш çамрăкĕсем пухăнмалла имĕш унта. Чи пултаруллисене съезда пыма йыхравлаççĕ. Çĕрпӳри гимназири тантăшĕсемпе пĕрле Анна та çитет Хусана. Кунта вăл кĕтмен-туман çĕртен Степан Максимовпа тĕл пулать. Вăл Чĕмпĕрти çамрăксен делегацине ертсе килнĕ иккен съезда. Хăй вĕрентнĕ хĕрачана курсан музыкант чăннипех хĕпĕртесе ӳкет.

– Анечка! – тет ăна, пысăк ытамне илсе. – Мĕнле телей эсĕ килни! Манăн сан валли пĕр юрă пур. Эсĕ ăна пĕлетĕн, «Хĕр йĕрри». Рояль партине те çырса хатĕрлерĕм. Шубертăнни пекех янкăр тăрă, ир сывлăшĕ пек уçă. Кама шанса парăп-ши, теттĕм. Акă ĕнтĕ, ылттăнăм, тупăнтăн. Сансăр пуçне ăна никам та йĕрсе-юрласа параяс çук. Мана кунта концерт программи хатĕрлеме хушрĕç-çке. Питĕ хăвăрт тумалла.

Анна Ивановна сцена çине тухсан юррине пуçличченех зал пăлханма тытăнать: «Епле хитре чăваш хĕрĕ! Сасси тата мĕнлерех-ши?» Сасси вара хĕрача сăн-сăпатĕнчен пĕрре те кая пулман. Залра юрă пĕр тикĕссĕн, пĕр çепĕççĕн, çӳлте, сывлăш хумĕсем çинче сарлака çунаттисене сисĕни-сисĕнми хускаткаласа ярăнакан ăмăртайăк евĕр шăранса юхнă:

Ах, аттеçĕм, аннеçĕм,

Эпĕ ларас вырăна

Кушак чĕппи илсе ларт.

Эпĕ çиес çăкăра

Кушак умне касса хур...

Ку ĕнтĕ Анна Токсинан сцена çине ярса пуснă пĕрремĕш утăмĕ пулнă. Ку таранччен пĕччен тухса юрламанччĕ-ха вăл халăх умне...

Кун хыççăн кун иртет. Анна Çĕрпӳри курсран та вĕренсе тухать. Шăпа ăна халĕ Мускав консерваторине илсе çитерет. Лайăх педагог патне лекет вăл кунта. Надежда Васильевна Савина профессор патĕнче пултарулăха туптать. Савина Петербургра чаплă музыкант кил-йышĕнче çуралса ӳснĕ, Полина Виардо патĕнче те вĕреннĕ! Пысăк театрта юрланă. Унăн кун-çулĕ Аннăшăн çăтмахри пек, нимĕнле шухăш-ĕмĕт вылявĕ те вĕçсе çитейми тĕнче хĕрри пек

туйăннă.

Çирĕм виççĕмĕш çул. Çурла уйăхĕн 9-мĕшĕнче Шупашкара Мускавран телеграмма килет: ял-хуçалăх выставкине юрлакансем, ташлакансем, музыкантсем ямалла. Федор Павлович хыпăнса ӳкет. Мĕнле япала ку!? Иквиçĕ кунтанах тухса каймалла.

Çармăссемпе тутарсем тахçанах хатĕрленеççĕ иккен. Эпир паян тин пĕлетпĕр. Çăпата сырса шăхăрса юлас марччĕ ĕлĕкхилле. Хатĕрленес хăвăртрах!

Анна Токсина та Федор Павлович пухнă коллектива хутшăнать. Хор солистки пулса выставкăри чăваш павильонĕнче, халăхсен туслăх касĕнче, университетра, музыка наукисен институтĕнче, халăх академийĕнче, Кремльти Свердлов залĕнче тата ытти эстрадăсем çинче юрлать. Концертсем пур çĕрте те ăнăçлă иртеççĕ.

1924 çулта Анна Ивановна Токсина упăшкине Чăваша ĕçлеме янă май Шупашкара таврăнать. Пĕр вăхăт «Канаш» хаçатра, «Ĕç хĕрарăмĕ» журналта ĕçлет. Çав хушăрах Чăваш наци хорĕн солистки пулса хайĕн ăсталăхне ӳстерсе пырать. Çирĕм саккăрмĕш çулта чăваш хорĕ Мускавра уйăх çурă концертсем кăтартать. Анна Токсина пластинка валли тăвата юрă юрласа парать çавăн чухне. Çирĕм тăххăрмĕш çулта – каллех Мускав. Пысăк театрта, Культура паркĕн эстради çинче янăрать унăн сасси. Хăйĕн юратнă профессорĕпе те тĕл пулать Анна Ивановна. «Шел, Анечка, – тет Надежда Васильевна пăшăрханса, – вăхăтсăр пăрахмалла пулчĕ консерваторие. Пуласлăху илĕртӳллĕччĕ, çулу анлăччĕ. Юрĕ ĕнтĕ, сассуна сыхла. Ман сăмахăмсене ан ман. Сасă вăл – черченкĕ инструмент».

Халăх умĕнче чап илнĕ юрăçă 1932 çулта радиора ĕçлеме тытăнать, музыка редакцине тытса пырать. Çав çулсенче Владимир Кривоносов çырнă «Хаваслăх» музыкăлла комеди сцена çине тухать. Лисук партине Анна Токсинана юрлаттараççĕ. Чаваш радио çĕнĕ произведенипе пуянланать. Иосиф Люблин «Нарспи» сюжечĕпе радиооратори хатĕрлет, вăл тата Владимир Кривоносов тăрăшнипе Петр Чайковскин «Евгений Онегин»

оперинчи уйрăм сценăсем чăваш театрĕн сăн-сăпатне илем кӳреççĕ. Анна Токсинан илĕртӳллĕ сасси вĕсенче те килĕшуллĕ янăрать.

Вăтăр çиччĕмĕш çулта хĕлле Анна Токсина Чăваш хорĕпе Ленинграда каять. Çур уйăха тăсăлаççĕ кунти концертсем. Чăваш тумĕллĕ, сурпанлă-хушпуллă чăваш хĕрарăмĕ çурçĕр çыннисене тыткăна илет, тĕлĕнтерет. Вăл юрланине И. Я. Яковлевăн ывăлĕ Алексей Иванович итлесе савăнать. Вăл пĕтĕм коллектива çĕр выртмаллах хăйĕн хваттерне илсе каять. Тул çутăличченех юрă шăранать чăваш кĕввисене ашшĕ пекех сума сăвакан Алексей Иванович патĕнче...

Уяр çанталăкра аçа çапнă пекех çав çулхине ахăрсамана пуçланса каять. Мăшăрĕпе пĕрлех Анна Ивановна та «халăх тăшманĕ» пулса тăрать. Çирĕм çула яхăн тăван халăхĕ умне кăлармасăр пытарса усраççĕ чăваш музыка культурин чи çутă çăлтăрне. Хĕрĕхе те çитмен юрăça аталанса, пиçсе çитнĕ тапхăрта юрă юрлама чараççĕ. Чăваш вокал искусствишĕн нихăçан таврăнми, нимĕнпе сипленми çухату пулнă ку.

Аллă улттăмĕш çулта кăна Анна Ивановнан хăйĕн репертуарĕнчи хăш-пĕр юрăсене пленка çине çырма май килет. Анчах, мĕнех тăвайăн, çын çеç мар, сасă та ватăлать-çке, хайĕн çамрăклăхри сĕткенĕпе илемне çухатать. Ун чухнехи пленкăсем те çапах Анна Ивановна сасси мĕн тери çирĕп, парка та илĕртӳллĕ пулнине туйса илме май параççĕ.

Анна Токсина 1985 çулта сакăрвун саккăра кайсан пиртен уйрăлса кайрĕ. Анчах унăн сумлă ячĕ чăваш музыка культурине ĕмĕрлĕхех кĕрсе юлĕ.